25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 МАЙ 29 ЭРНЕКУН 123 (6058) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлеш ӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Парти ӗҫӗнчи ҫӗнӗ кадрсене куллен пулӑшса пымалла

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсем чылайӑшӗ улшӑнчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар ретне кайнӑ юлташсем вырӑнне ҫӗнӗ кадрсем тӑчӗҫ. Вӗсенчен нумайӑшӗсем парти ӗҫне малтанхи хут тытӑнчӗҫ. Ҫакӑн пирки вӗсен ӗҫри опыт сахал. Ҫакӑнтан вара пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене ВКП(б) райкомӗсем енчен пӗрмаях пулӑшса пыма кирли тухса тӑрать.

Пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене ӗҫлеме вӗрентес тӗлӗшпе ВКП(б) райкомӗсем тата хула комитечӗсем нумайӑшӗ куллен ӗҫлесе пыраҫҫӗ: секретарьсен канашлӑвӗсене, кӗске вӑхӑтлӑх семинарӗсене тӑтӑшах ирттереҫҫӗ, вӗсене валли докладсем организацилеҫҫӗ, Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ хушнисене, партипе правительство постановленийӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлемеллине кӑтартса параҫҫӗ. Райкомсен работникӗсем пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене тата вӗсен заместителӗсене вырӑна тухса пулӑшаҫҫӗ, партипе правительство решенийӗсене пурнӑҫлассишӗн, предприятисен, колхозсен, совхозсен производство планӗсене срокчченех тултарассишӗн кӗрешес ӗҫре практикӑллӑ пулӑшу параҫҫӗ. Ун пек тунӑ ҫӗрте вара хуҫалӑхлӑ ӗҫсем те ӑнӑҫлӑн пулса пыраҫҫӗ.

Ҫакна ВКП(б) Калинински райкомӗн ӗҫӗсем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ. Ҫураки пуҫланас умӗн райком пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсен канашлӑвӗсене темиҫе хут ирттернӗ, райкомӑн секретарӗсемпе отделсен заведующийӗсем, инструкторӗсем пӗрмаях колхозсене кайса ҫӳренӗ, пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене ӗҫлеме вӗрентсе пынӑ, вӗсене практикӑллӑ канашсем панӑ, колхозсенче партиллӗ-массӑллӑ ӗҫе туса пыма конкретно пулӑшнӑ. Ҫавӑн пек ӗҫленине пула район тӗштырӑсене акса хӑварас ӗҫе ӑнӑҫлӑн туса ирттернӗ.

Кунпа пӗрлех ҫакна палӑртмалла. ВКП(б) райкомӗсем пурте мар-ха пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене ҫавӑн пек пулӑшаҫҫӗ, хӑшпӗр пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсем темиҫе уйӑх хушшинче те райкомран нимӗнле кӑтарту та, пулӑшу та илеймеҫҫӗ. Сӗнтӗр районӗнче ҫакнашкал та пулнӑ: Мӑркавӑшри пуҫламӑш парторганизацин секретарьне 1941 ҫулти октябрьте Морозов юлташа суйланӑ. Унччен вӑл парти ӗҫӗнче нихӑҫан та пулман. Суйланӑ хыҫҫӑн ӑна никам та практикӑллӑ пулӑшу паман. Вара ҫав парторганизацире кӑҫалхи март уйӑхӗччен пӗр пуху та пулман. Кун пек фактсене татах та илсе кӑтартма пулать. Анчах ҫак фактранах ӗнтӗ пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене Сӗнтӗр районӗнче ҫителӗксӗр пулӑшни курӑнать.

Пирӗн час-тасах ҫакӑн пек те пулать: райком пуҫламӑш парторганизацисен канашлӑвне е семинарне пухса ирттерет, унта вӗсене пӗр-пӗр ӗҫе мӗнле туса пымаллине калаҫа кӑтартаҫҫӗ, вара лӑпланаҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗн работникӗсем, уйрӑмӑнах инструкторӗсем, пуҫламӑш парторганизацин секретарӗсене кашнине уйрӑмӑн практикӑллӑ пулӑшу пама манаҫҫӗ.

Парти райкомӗсен работникӗсем хӑйсен районӗнчи партиллӗ ӗҫӗн опытне мӗн чухлӗ лайӑхрах пӗлсе ҫитеҫҫӗ, вӗсемшӗн пуҫламӑш организацисен секретарӗсене пулӑшма ҫавӑн чухлӗ ҫӑмӑлрах пулӗ. Ӗҫри лайӑх опыта ытти парторганизацисене куҫармалла.

Пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене комсомол, профсоюз тата ытти организацисене ертсе пыма, рабочисен, колхозниксен, хӗрарӑмсен, ҫамрӑксен пухӑвӗсене тата митингӗсене ирттерме вӗрентмелле. Ҫав ӗҫсене тунӑ чухне вырӑнти конкретнӑй примерсемпе усӑ курмалла.

Халӑха ҫар ӗҫне вӗрентесси, Хӗрлӗ Ҫар валли резервсем хатӗрлесси, сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланас ӗҫе организацилесси — ҫаксем вӗсем пуҫламӑш парторганизацин ӗҫӗсем, унӑн ҫав задачӑсене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине пӗрмаях тӗрӗслесе тӑмалла.

Пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсене ВКП(б) ретне ҫӗнӗ ҫынсем илес ӗҫе, парти пухӑвӗсене лайӑх хатӗрленсе ирттерме, парти хуҫалӑхне йӗркелеме (коммунистсене шута илсе пыма, протоколсене ҫырма, парти райкомне информацисем тӑратма, член укҫисем пухма) вӗрентмелле.

Пирӗн умра тӑракан ҫавтери пысӑк задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртес тесен, пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсен хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвӗсене ӳстерсе пымалла. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тӗплӗн вӗренес пулать, хаҫат-журналсем вуламалла.

Халӑхи питех те ответлӑ тата кӑткӑс вӑхӑт пуҫламӑш парторганизацисене нихӑҫанхинчен лайӑхрах ӗҫлеме хушать. Пирӗн ҫулпуҫ Сталин юлташ 1941 ҫулти июлӗн 3-мӗшӗнче, Октябрь уявӗсен кунӗсенче каланӑ сӑмахсенче, 1942 ҫулти февралӗн 23-мӗшӗнчи тата майӑн 1-мӗшӗнчи приказсенче панӑ кӑтартусене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе чӑн-чӑн большевикла хастарлӑхпа ӗҫлемелле.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 27-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 27-мӗшӗнче **Харьков** енче пирӗн войскӑсем хӑйсем йышӑнса тӑракан рубежсене ҫирӗплетсе пынӑ тата противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Изюм—Барвенково енче пирӗн войскӑсем противникӑн хаяр атакисене сире-сире янӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле паллӑ ӗҫсем те пулса иртмен.

Майӑн 26-мӗшӗнче нимӗҫсен 82 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 23 самолет пӗтнӗ.

* * *

Майӑн 26-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 43 танкне, 2 бронемашинине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 185 автомашинине, горючи тултарнӑ темиҫе автоцистернине, 10 полевой тата зенитнӑй орудине, 8 минометне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, чугунҫул ҫинчи состава ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине 8 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Изюм—Барвенково енче пирӗн войскӑсем, противникӑн атакисене сире-сире ярса, унӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине питех те пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пӗр стрелковӑй чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсен 6 танкне тата 1400 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра противникӑн йышлӑ вӑйӗсем юханшыв урлӑ каҫма хӑтланнӑ. Коротович юлташӑн гвардеец-артиллерисчӗсем тӑшмана хӑйсен сывӑхне янӑ та орудисенчен пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсен каялла чакмалла пулнӑ. Тыткӑна лекнӗ салтаксемпе офицерсем каласа панӑ тӑрӑх, противникӑн ҫав ҫапӑҫура 1000 ҫын ытла вилнӗ тата хӗҫпӑшал нумай пӗтнӗ.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, противника хирӗҫ ҫапӑҫса, 300 гитлеровецран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче старши лейтенантсем Ивановпа Казаков, танк командирӗ старшина Махонин тата лейтенант Джагур хӑйсене пуринчен ытла палӑртнӑ. Вӗсем нимӗҫсен 9 орудине тата 14 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Майӑн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫурҫӗрти пӗр объект ҫине тӑшманӑн темиҫе вуншар самолечӗ вӗҫсе пырса тапӑнма хӑтланнӑ. Противник самолечӗсене хирӗҫ пирӗн истребительсем тухнӑ. Сывлӑшра ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ. Малтанлӑха палӑртнӑ даннӑйсем тӑрӑх, пирӗн летчиксем нимӗҫсен 5 самолетне персе ӳкернӗ, ултӑмӑшне батальоннӑй комиссар Дягин юлташ, «Харрикейн» самолетпа вӗҫекенскер, таран туса ҫӗмӗрнӗ. Нимӗҫсен самолечӗ ҫӗре персе аннӑ та хӑйӗн бомбисем ҫурӑлнипе арканса кайнӑ. Дягин юлташ хӑйӗн аэродромӗ ҫине лайӑхах ҫитсе анса ларнӑ.

* * *

Державин юлташӑн чаҫӗнчи артиллеристсем (Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 26 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, артиллерин тата минометсен 24 батарейине пусарса лартнӑ, 48 огневой точкине тата 2 минометне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Беззубов юлташ командир пулса тӑракан чаҫри 22 снайпер икӗ уйӑх хушшинче нимӗҫсен 736 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Снайпер Чухряев юлташ ҫав вӑхӑт хушшинче 160 гитлеровеца, Прохоров юлташ—80, Афанасьев юлташ—64, Гуляев юлташ—73, Гребенков юлташ — 57 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн разведчиксен ушкӑнӗ, старши лейтенант Барабанчиков юлташ ертсе пынипе, противник йышӑнса тӑракан П. ялне сасартӑк ҫӗмӗрсе кӗнӗ те нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене 50 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата боеприпассен 2 складне ҫунтарса янӑ.

* * *

Смоленск облаҫӗн районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен Г. юлташ ертсе пыракан отрячӗ юлашки 3 кун хушшинче нимӗҫсенне тырӑ хунӑ 2 склада тата 600 тонна горючи ҫунтарса янӑ. Партизансем нимӗҫсен кӗпере сыхласа тӑракан постне пырса тапӑннӑ. Ҫавӑн чухне совет патриочӗсем 9 гитлеровеца вӗлерсе, чугунҫулпа иртсе пыракан боеприпассем тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ тиенӗ состава сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 294-мӗш артполкран тыткӑна царӑннӑ унтер-офицер Эдвиль К. ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн батарейӑсем Н. ялӗнче тӑратчӗҫ. Ҫӗрле Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем наступлени пуҫласа ячӗҫ. Часах пирӗн батарея командирӗ тата взвод командирӗ Баер лейтенант вилчӗҫ. Ытти офицерсем тарса пӗтрӗҫ. Салтаксен пӗр пайӗ ним тӗлли-паллисӗр вӑрман патнелле чакма пуҫларӗ. Ыттисем пурте хӑйсен пурнӑҫне сыхласа хӑварас тесе хӑйсен ирӗкӗпе тыткӑна парӑнчӗҫ».

* * *

Касель хулинчи Хеншельн ҫар заводӗнче (Германия) темиҫе пин ҫын поляк, чех, бельгиец тата француз ӗҫлет. Вӗсем йӗри-тавра йӗплӗ пралукпа карса тухнӑ бараксенче пурӑнаҫҫӗ. Ҫав рабочисене кунне 12—14 сехет ӗҫлеттереҫҫӗ. Лагерьте выҫӑпа тата тӳсме ҫук йывӑр каторгӑлла ӗҫпе асапланса, ютҫӗршыв рабочийӗсем кунсеренех вуншар ҫын ытла вилеҫҫӗ. Май уйӑхӗ пуҫламӗшӗнче рабочисен пӗр ушкӑнӗ администрацирен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатма ыйтнӑ. Ҫав кунах гестапо 25 ҫынна арестленӗ. Паллӑ пулнӑ тӑрӑх, ҫав арестленӗ ҫынсене пурне те тем тӗрлӗ асап кӑтартса вӗлернӗ.

Майӑн 28-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майӑн 28-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле **Харьков** енче пирӗн войскӑсем хӑйсем йышӑннӑ рубежсене ҫирӗплетсе пынӑ.

Изюм—Барвенково енче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе пехотине хирӗҫ вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Харьков енче Терехов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫсем 3 кун хушши ҫапӑҫса нимӗҫсен 26 танкне ҫунтарса янӑ тата 20 танкне ытла ҫӗмӗрнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 200 ҫын ытла вилсе юлнӑ. Ҫапӑҫура Кулиш капитан ертсе пыракан танкӑн экипажӗ уйрӑмӑнах палӑрнӑ, вӑл нимӗҫсен 6 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра гварди подразделенийӗ противника вӑл йышӑннӑ позицисенчен хӗссе кӑларнӑ, 450 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче нимӗҫсем пирӗн пӗр чаҫӑн позицийӗсене атакӑланӑ. Пирӗн боецсем противникӑн атакине ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ та малалла куҫнӑ. Вилнисене кӑна шутласан та, нимӗҫсен 600 салтакпа офицер пӗтнӗ. Тепӗр участокра Юдинцев командирӑн подразделенине гитлеровецсем виҫӗ хут ӑнӑҫсӑр атакӑланӑ. Вилнисене 200 ҫын ҫухатса хӑварса, противник хӑйӗн малтанхи позицийӗсем ҫине чакнӑ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 400 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен 3 танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сержант Устинов юлташ ертсе пыракан пирӗн боецсен отделенийӗ ҫӗрле противник тылне кӗрсе кайнӑ. Нимӗҫсен 2 часовойне шӑппӑн вӗлерсе, красноармеецсем блиндаж патне пуса пынӑ та гранатӑсем ывӑтса нимӗҫсен 10 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Икӗ ручной пулемет, винтовкӑсемпе автоматсем тытса илсе, боецсем хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Партизансен «Батя» ятлӑ отрячӗ, Смоленск облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенче кӗрешекенскер, майӑн 5-мӗшпе 20-мӗш хушшинче нимӗҫсен 480 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Партизансем боеприпас тиенӗ 4 автомашинӑна, 2 ҫӑмӑл машинӑна, пӗр танка пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен чугунҫул ҫинчи составне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 57-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 217-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Гейнц Менцель ҫапла каласа панӑ: «Врач Рингельц мана 57-мӗш дивизи хӑйӗн личнӑй сотавӗн ҫуррине ҫухатнӑ тесе каларӗ. 179-мӗш полкӑн ҫухату нумайрах пулнӑ, унта салтаксен пилӗк пайӗнчен пӗр пайӗ ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Салтаксем хушшинче вӑрҫа хирӗҫле шухӑш-кӑмӑлсем вӑйланса пыраҫҫӗ. Апрельпе май уйӑхӗнче дивизи командованийӗ темиҫе приказ кӑларчӗ, унта салтаксем ҫартан тарма хӑтланни тата Хӗрлӗ Ҫар енне куҫни ҫинчен каланӑ. Салтаксем нумайӑшӗ офицерсем ҫине тарӑхаҫҫӗ. Офицерсем ҫине тӑпманла пӑхни часрах та часрах ҫиеле тухма тытӑнать. Обер-лейтенант Георг Шиндлер — 10-мӗш рота командирӗ — персе пӑрахассипе хӑратса салтаксене атакӑна хӑваланӑ. Виҫӗ кун иртсен ӑна хыҫран персе вӗлернӗ. Айӑплисене шырани нимӗнле результат та паман. Хӑратни те, офицера вӗлерекенсене кӑтартса паракан ҫынна тӑвай ҫӗршыва отпуска яма пулни те пулӑшмарӗ».

* * *

Нимӗҫсен 331-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 558-мӗш полкран хӑй ирӗкӗпех тыткӑна парӑннӑ салтак Иосиф К. ҫапла пӗлтернӗ: «Нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем советӑн мирлӗ халӑхне тискеррӗн асаплантарнине эпӗ хам куҫпа курнӑ. Крюково ялӗнче стариксене, хӗрарӑмсемпе ачасене 200 ҫынна яхӑн персе вӗлерчӗҫ. Бельня ялӗнче 50 ҫынна вӗлерчӗҫ».

* * *

Польша патриочӗсем нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене хирӗҫ хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра Краков воеводствинче нумай ҫӗрте пушарсем пулнӑ, пушара пула нимӗҫ ҫарне валли хатӗрленӗ вылььӑх апачӗ нумай пӗтнӗ. Поляксем шоссе ҫулӗсем ҫине шӗвӗр юпасем лартса тухаҫҫӗ, ҫав юпасем автомашинӑсен покрышкисене шӑтараҫҫӗ. Поляксем вагонсен буксисене хӑйӑр сапаҫҫӗ, чугунҫул рельсӗн гайкисене кӑларса илеҫҫӗ тата ытти те. Майӑн 18-мӗшӗнче Сохачевран инҫе мар вырӑнта Хӗвелтухӑҫнелле каякан ҫар эшелонӗ пысӑк крушени тӳснӗ. Крушени пулнипе нимӗҫсен 8 танкӗ пӗтнӗ тата сиенленнӗ.

ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсенчи уйрӑмах палӑрнӑ рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата ертсе пыракан работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине парса наградӑласси ҫинчен

Монтаж тӑвас тӗлӗшпе, ҫӗнӗ йышши производствӑсене хӑвӑрт вӗренсе алла илес тӗлӗшпе, ҫӗнӗ технологи процесне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн тата продукци туса кӑларас тӗлӗшпе производствӑра паха тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн Шупашкар хулинчи промышленность предприятийӗсенчи ҫак рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата ертсе пыракан работниксене ЧАССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Александр Андреевич **Блошенкӑна**—цех механикне.
2. Яков Семенович **Бенские** — завод директорне.
3. Леонид Зиновьевич **Бунина** — завод директорӗн заместительне.
4. Иван Николаевич **Гребенюка**—смена мастерне.
5. Зоя Михайловна **Даниловӑна** — слесарь ученицине.
6. Евгений Васильевич **Дмитренкӑна**—слесаре.
7. Димитрий Константинович **Жигунова** — старши мастера.
8. Вячеслав Иванович **Калитвянские**—цех начальникне.
9. Георгий Николаевич **Касьянова** —токаре.
10. Исаак Лазаревич **Княжевские** — старши технолога.
11. Александр Александрович **Комаровские**—цех мастерне.
12. Алексей Сильвестрович **Малыхина**—мастера.
13. Анна Тимофеевна **Маковскаяна** —изолировщицӑна.
14. Михаил Прокофьевич **Новикова** — мастера.
15. Полина Ноевна **Обермана** — слесарь-сборщике.
16. Василий Степанович **Поддубкӑна** —заводри партбюро секретарьне.
17. Федор Осипович **Рыченкона** — калибровщика.
18. Бронислав Адамович **Скиндера** — цех начальникне.
19. Сергей Григорьевич Федченкӑна—инструментальнӑй отделӑн начальникне.
20. Матвей Борисович **Цфасмана** —цех начальникне.
21. Димитрий Семенович **Черничкина**—главнӑй инженера.
22. Андрей Михайлович **Шульгана** —мастера.
23. Иван Михайлович **Шульгана** — производство начальникне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 ҫулти майӑн 28-мӗш.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗсем малалла пыраҫҫӗ

КАНАШ. Яманкассинчи туллимар вӑтам шкул пӗлӳ тӗрӗслевне пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илчӗ. Пӗлӳ тӗрӗслевӗччен мӗн вӗреннине ҫирӗплетсе хӑварас тӗлӗшпе учительсем хытӑ тӑрӑшрӗҫ, вӗренекенсем валли консультацисем организацилерӗҫ.

Пӗлӳ тӗрӗслевне лайӑх ирттерес тӗлӗшпе классем тата вӗренекенсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту анлӑ сарӑлчӗ. Ку ӑмӑртура 7-мӗш класс (руководителӗ С. А. Молдавская) малта пычӗ. Ку класра вӗренекенсем пурте вӗренӳре ӗлкӗрсе пыни палӑрчӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех пӗлӳ тӗрӗслевӗн расписанине, тӗрӗслеве ирттермелли текстсене, хут, чернил т. ыт. те вӑхӑтра хатӗрленӗ.

Майӑн 21-мӗшӗнче пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пуҫланчӗҫ. Ҫак кун 4-мӗш класра вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе испытани тытрӗҫ. Ку предметпа «плохо» илнисем пулмарӗҫ, «отлично» —1, «хорошо»—4, «посредственно»—6 ача илчӗҫ. 7-мӗш класра та пӗлӳ тӗрӗслевӗ ӑнӑҫлӑ иртрӗ. Кунта испытание пурте пынӑ. Вӗсем геометрипе испытани тытрӗҫ. «Плохо» паллӑ илнисем пулмарӗҫ. 2 ача «отлично», 6—«хорошо», 3—«посредственно» илчӗҫ.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗсем малалла пыраҫҫӗ.

И. МАКСИМОВ.

Ҫуракинче пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

43. Вӑрмар районӗнчи **«Победа» колхоз** (колхоз председателӗ **Н. И. Белов** юлташ). Колхоз ир акмалли тӗштырӑ культурисене 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Колхоз пӗтӗм акана пысӑк пахалӑхпа туса ирттернӗ. Оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ колхозниксене пулӑшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хӑварнӑ. Акара пуринчен ытла **А. Баданова** юлташӑн бригади палӑрнӑ. Вӑл пысӑк пахалӑхпа 5,5 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ.

44. Вӑрмар районӗнчи **«Маяк» колхоз** (колхоз председателӗ **И. Н. Турдушев** юлташ). Колхоз ҫуркунне акмалли тӗштырӑ тата пӑрҫа-ясмӑк культурисене 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ака планне 101 процент тултарнӑ, унсӑр пуҫне тата 5 гектар тулӑ акса хӑварнӑ. Ҫав лаптӑкран пухса илнӗ тырпул оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозниксене пулӑшма каять. Пӗтӗм акана пысӑк пахалӑхпа туса ирттернӗ. Акара пуринчен ытла **А. Турдушевӑпа П. Смирнов** юлташсен бригадисем палӑрнӑ. Вӑл бригадӑсем 5,5 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ҫак сухаҫӑсем вӑрҫӑри пек ӗҫленӗ: Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ упӑшки вырӑнне тӑнӑ **М. Белкова** юлташ, вӑл кулленхи нормӑна 170 процент тултарса пынӑ тата **В. Захарова** юлташ, вӑл плана кунсеренех 200 процент тултарса пынӑ. Агитаторсем **Ф. Андреевпа В. Прокопьева** юлташсем ака вӑхӑтӗнче уйрӑмах лайӑх ӗҫленӗ.

45. Советски районри Турай ялсоветне кӗрекен **В. М. Молотов ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Ф. Н. Николаев** юлташ). Колхоз ҫуркунне акмалли тӗштырӑ культурисене 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозниксене пулӑшма колхоз планран ирттерсе 1 гектар акса хӑварнӑ. Акара сухаҫсем **Е. Титовпа К. Ильин** юлташсем фронтри пек ӗҫленӗ. Вӗсем кашниех кулленхи нормӑна 200 процента ҫити тултарса пынӑ. Тырӑ акакансем — **П. П. Павловпа Н. Т. Терентьев** юлташсем те лайӑх ӗҫленӗ. Вӗсем нормӑна 120 процента ҫити тултарса пынӑ. Сӳрелекенсем —**Ильинапа Архипова** юлташсем кашниех нормӑна 150 процента ҫити тултарса пынӑ.

46. Советски районри **«Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз** (колхоз председателӗ **И. А. Охтяркин** юлташ). Ир акмалли тӗштырӑ культурисене колхоз 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ҫуртри акмалли плана 107,5 процент тултарнӑ. Колхоз оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозниксене пулӑшма 3 гектар акса хӑварнӑ. Колхоз пӗтӗм акана пур енчен те пысӑк пахалӑхпа туса ирттернӗ. Сухаҫсем **В. Данилова, М. Николаева, Е. Данилова, У. Венедиктова** юлташсем питӗ лайӑх ӗҫленӗ. Вӗсем кашниех нормӑна кунсерен 135 процента ҫити тултарса пынӑ. Сӳрелекенсем — **Ф. Дмитриев, Е. Яруткова** юлташсем те лайӑх ӗҫленӗ. Вӗсем кулленхи нормӑна яланах 140 процента ҫити тултарса пынӑ.

47. **Александр Михайлович Макаров** — Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗнчи тракторсен бригадин бригадирӗ. Макаров юлташӑн бригади ҫуракинчи трактор ӗҫӗсен планне 127 процент тултарнӑ, 128 килограмм горючи перекетленӗ. Малта пыракан трактористсем—**Н. Емельянов, Д. Илюшкина** юлташсем. Вӗсем смена нормине яланах 130—150 процент тултарса пынӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Тӑшманӑн атакисене сирсе пӑрахнӑ

ИЗЮМ — БАРВЕНКОВО ЕНӖ, майӑн 27-мӗш. **(ТАСС спецкорӗ).** Фронтӑн ку енчи чылай участокӗсенче паян хаяр ҫапӑҫусем пычӗҫ. Пирӗн ҫар чаҫӗсем тӑшмана питӗ вирлӗн ҫапаҫҫӗ, пуҫарулӑха хӑйсен аллине ҫавӑрса илеҫҫӗ, нимӗҫсемпе румынсен атакисене пурне те сире-сире яраҫҫӗ.

Ҫынсем тӗлӗшпе те, техника тӗлӗшпе те пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ пулин те, фашистсем пирӗн артиллерипе пехота вучӗ айне хӑйсен резерври чаҫӗсене, танксене тата авиацие кӗртсе яраҫҫӗ. Тем пек ҫине тӑрса тӑрӑшнӑ пулин те, тӑшман малалла каяйман.

Пӗр участокра фашистсен командованийӗ пирӗн стрелковӑй чаҫа хирӗҫ икӗ полка яхӑн румынсене кӗртсе янӑ. Вӗсене стратеги енӗпе питӗ лайӑх вырӑнти пункта туртса илме хушнӑ. Атакӑна кӗртсе ярас умӗн ҫав румын салтакӗсене, «хастарлӑрах ҫапӑҫчӑр» тесе, ытти чухнехинчен ытларах порци эрех панӑ.

Румынсем умӗн танксем пынӑ. Анчах фашистсен танкӗсем хӑйсене хушнӑ ӗҫе тума пултарайман.

Пирӗн малтанах йышӑнса хунӑ позицисенче танксене пӗтермелли тупӑсем хатӗр тӑнӑ, бронебойщиксен расчечӗсем вырнаҫса выртнӑ. Тӑшман танкӗсене хирӗҫ совет танкӗсем тухнӑ, артиллери вирлӗн персе тӑнӑ. Хӑйсене хирӗҫ ҫавтери сасартӑк тата вӑйлӑн пырса ҫапнипе, тӑшманӑн машинисем пире сиен тӑваймасӑрах каялла ҫавӑрӑнса кайнӑ. Танксем хыҫҫӑн пехота та хӑвӑрт каялла чакнӑ. Ҫулсем ҫинче пирӗн танкистсем тата артиллеристсем персе арканнӑ темиҫе машина выртса юлнӑ.

Тӑшман тарӑхса ҫитнӗ. Малтанхи атака хыҫҫӑнах иккӗмӗш хут, виҫҫӗмӗш хут атака тунӑ. Анчах пур атакисене те пирӗн чаҫсем сире-сире янӑ. Вара румынсем тӗттӗм пулаччен кӗтсе тӑнӑ та, хӑйсен салтакӗсене ҫӗнӗрен тепрер порци эрех парса, «психикӑллӑ атака» пуҫласа янӑ. Тискер банда халӑх пурӑнакан пункт ҫине икӗ енчен харӑс, урнӑ пек кӑшкӑрашса тапӑнса пынӑ. Совет воинӗсем ним хыпӑнса ӳкмесӗр, вӗсене хӑйсен позицийӗсем сывӑхнерех янӑ та, гранатӑсем ывӑтса тата штыксемпе чике-чике вӗлерсе тӑкнӑ.

Ҫапӑҫу темиҫе сехет хушши пынӑ. Румынсем, пысӑк ҫухатусем туса, пӗр ял хӗрне ҫӗмӗрсе кӗме пултарнӑ. Хаяр ҫапӑҫу вӗриленнӗҫемӗн вӗриленсе пынӑ. Пирӗн боецсем арӑслансем пек ҫапӑҫнӑ. Анчах тӑшманӑн йышӗ ытларах пулнӑ. Тӑшман малалла кӗрсе пынӑ. Тӑшмана яла кӗртмесӗр тӑракан паттӑр боецсен вӑйӗ пӗтсе ҫитес пекех туйӑннӑ, анчах та хӑйсем ҫӗнтерессе ним иккӗленмесӗр шанса тӑракансем ҫирӗп тӑнӑ, чакман. Часах пулӑшу ҫитнӗ. Капитан Макарычевӑн подразделенийӗ тӑшман ҫине вирлӗн пырса кӗнӗ. Румынсем тӳсе тӑрайман, хӑвӑрт каялла чакма тытӑннӑ. Ҫул ҫине темӗн чухлӗ виле тӑкӑна-тӑкӑна юлнӑ.

Ытти йышши хӗҫпӑшаллӑ ҫар чаҫӗсемпе пӗрле ҫапӑҫса, пирӗн хисеплӗ пехотинецсем халӑх пурӑнакан пысӑк пункта тӑшмана памасӑр хӳтӗлесе хӑварнӑ кӑна мар, вӗсем тата питӗ нумай хӗҫпӑшал, вӑрҫӑ хатӗрӗ туртса илнӗ.

Тыткӑна лекнӗ Румын салтакӗсем 4 сехет хушшинче те йӗркеллӗн ӑна кӗрсе ҫитеймен.

«Ялта пӗчӗк гарнизон кӑна тӑрать, пӗрре атакӑламалла та хӗрлисем тухса тараҫҫӗ, тесе нимӗҫсем пире шантарсах каларӗҫ.

Анчах ӗҫ пачах урӑхла пулса тӑчӗ. Хӗрлисем мар, румынсем тарчӗҫ», — тенӗ тыткӑна лекнисем.

Румын салтакӗсене ҫапла тепӗр хут лайӑх вӗрентнӗ.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Артиллерист-гвардеецсем тӑшманӑн эшелонне пӗтерсе тӑкнӑ

ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, майӑн 26-мӗш. **(ТАСС спецкорӗ).** Н-ски гвардейски часть боецӗсем тӑшмана тӗл пере-пере ҫунтараҫҫӗ. Гвардейски батарейӑсенчен персе, тӑшманӑнне икӗ кун хушшинче 18 автомашина, груз тиенӗ 59 лав, 3 оруди пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассемпе горючи усракан 2 склада сирпӗнтерсе янӑ, пӗр дзота аркатнӑ, артиллерин 3 батарейине ҫӗмӗрнӗ.

Икӗ батарейӑран персе, нимӗҫсен эшелонне турпас пуличченех аркатса пӑрахнӑ. Снарядсем тиенӗ поезд составне 20 километртан персе пӗтӗмпех сирпӗнтернӗ.

Артиллеристсен ҫакӑн пек ҫӗнтерӳллӗ ӗҫӗнче гварди корректировщикӗ старши лейтенант Тайнов тата гварди наводчикӗ красноармеец Молодкин юлташсем палӑрнӑ.

А. ДЕНИСОВ.

Çуракине хăвăртрах вĕçлесе тăванла республикăсен ăмăртăвĕнче мала тухар!

Çураки республикăра мĕнле пырать

Кăçалхи майăн 25-мĕш тĕлне республикăри колхозсем 300.438 гектар акса çураки планне 85,5 процент тултарчĕç. Иртнĕ çулта çак кун тĕлне çураки планне 73,6 процент тултарнă пулнă.

Уйхир ĕçĕсем Шăхасан тата Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсенче уйрăмăнах организованно пулса пыраççĕ. Çĕмĕрле районĕ çурхи культурăсем акмалли плана 102 процент, Шăхасан районĕ — 100 процент тултарнă. Вăрмар, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски тата Калинински районсем те çурхи культурăсене çак кунсенче акса пĕтереççĕ.

Пĕрчĕллĕ тырăсем акас плана республикăра 102,4 процент тултарнă. Республикăри 19 район пĕрчĕллĕ тырăсем акас плана ирттерсе тултарчĕç.

Çуракин малтанхи кунĕсенчи пекех, уйхир ĕçĕсем Пăрачкав, Улатăр, Шăмăршă, Первомайски районсенче питех те вăраххăн пулса пыраççĕ. Юлашки кунсенче çанталăк çавтери лайăх тăрать. Юлса пыракан районсенчи парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, ака хăвăртлăхĕсене ÿстерес тата кая юлнине пĕтерес тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле пулнă. Анчах çакă курăнмарĕ. Улатăр, Пăрачкав, Первомайски тата Шăмăршă районĕсенче ака ĕçне хăвăртлатас тĕлĕшре пур майсемпе те усă курмаççĕ. Уйхир ĕçĕсен планне çак районсенче 60 процентран та сахалрах тултарнă. Юлашки 5 кун хушшинче çак районсем малтанхинчен те начартарах ĕçлерĕç.

Малта пыракан районсем ака ĕçне пĕтернĕ хыççăнах çĕрулми лартма тата техникăллă культурăсене акма тытăнчĕç. Калинински тата Красноармейски районсенчи колхозсем çĕрулми лартмалли плана 96 процент ытла тултарнă. Çĕрулми лартас ĕçре Шăмăршă районĕнчи колхозсем уйрăмăнах çавăрăнăçусăр ĕçлеççĕ, вĕсем майăн 25-мĕш тĕлне çĕрулми пĕр гектар та лартса хăварман. Улатăр районĕнчи колхозсенче çĕрулмие пĕтĕмпе те 6 гектар çеç лартнă.

Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан, Çĕмĕрле, Елчĕк МТС-сем çуркуннехи уйхир ĕçĕсенче лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, вĕсем çуракинче тракторсемпе ĕçлемелли плана ăнăçлăн тултарса, хăйсен тракторĕсене çĕртме сухи тăвас ĕçе куçарчĕç. Шăмăршă, Етĕрне, Улатăр, Первомайски, Шупашкар тата Çĕрпÿ машинно-тракторнăй станцисем малтанхи пекех юлса пыраççĕ.

Парти райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, çĕрĕç органĕсен, çавăн пекех тата МТС директорĕсемпе колхоз председателĕсен задачи çакăнта пулать: çураки планне район тăрăх тултарнин вăтам цифрисемпе лăпланса лармасăр, мĕнпур майсемпе усă курса, кашни колхозрах çураки планне кĕске срокра пысăк пахалăхпа тултарма тăрăшмалла. Колхозниксен ĕçне организацилес тĕлĕшре йĕркелĕх тумалла, колхозсен туртăм вăйĕпе туллинрех усă курмалла. Тракторсене пĕтĕм пултарулăхĕпе ĕçлеттермелле, çапла майпа çураки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлесе, Чăваш республикипе Мари республики хушшинче пыракан ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешмелле.

Çуракинчи ĕçсен планне МТС 97 процент тултарчĕ

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 28-мĕш. (Телефонпа). Пирĕн МТС-ри трактор бригадисем кăçал колхозсен уйхирĕсенче фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Партипе правительство «МТС трактористчĕсене тата тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисемпе ĕçлекен колхозниксене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлемелли çинчен» йышăннă постановленипе хавхаланнă трактористсемпе трактористкăсем, прицепщиксемпе прицепщицăсем çуракинче пысăк активлăх кăтартаççĕ. Вĕсем хушшинче халĕ ĕç нормине 2 хут ирттерсе тултарса пыракан двухсотниксем сахал мар.

Кăçалхи çуракинче уйрăмах Чуркин юлташ ертсе пыракан 7-мĕш номерлĕ бригада аван ĕçлет. Çемçе çĕре сухалани çине куçарса шутласан, бригада паянхи куна 549 гектар сухаланă, çуркуннехи ĕçсен планне 203 процент пурнăçланă. Ку бригадăра ĕçлекен тракторист Федотов юлташ уйрăмах пысăк çитĕнÿсем туса ĕçлет. Норма тăрăх çураки вăхăтĕнче унăн 65 гектар сухаламалла пулсан, майăн 26-мĕш тĕлне тракторист Федотов юлташ 201 гектар ытла сухаланă, ĕç планне 300 процент пурнăçланă. Çак хушăра вăл пурĕ 440 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ. Ку бригадăри ытти трактористсем те пултаруллăн ĕçлеççĕ. Ĕç нормине тăтăшах ирттерсе пурнăçласа пынăшăн бригадăри 6 трактористран 5 трактористчĕ преми илеççĕ.

МТС-ăн 6-мĕш номерлĕ бригади те (бригадирĕ Данилов юлташ) пысăк çĕкленÿпе ĕçлет. Бригада çуркунне тумалли ĕçсен планне 115 процент ытла тултарчĕ. Тракторист П. Михайлов 96 гектар сухаларĕ, норма тăрăх 45 гектар сухаламалла. Тракторист Семенов тата пысăкрах çитĕнÿ турĕ. Вăл газогенераторлă тракторпа çак хушăра 120 гектар сухаланă, планпа пăхнă нормăна 2 хута яхăн пурнăçланă.

Пирĕн МТС майăн 26-мĕш тĕлне çуркуннехи ĕçсен планне 97 процент тултарчĕ. Хăшпĕр бригадăсем халĕ ирхи çĕртме тăваççĕ. Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказ пире татах та пысăкрах çĕнтерÿсем тума хавхалантарать. Хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çара Сталин юлташăн боевой приказне ăнăçлăн тата хăвăртрах пурнăçа кĕртме пулăшса, пирĕн МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем ĕçре пысăкрах çĕнтерÿсем тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Р. ЕВГРАФОВ.

МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

ХĔРАРĂМСЕМ—ПЫСĂК ВĂЙ

Иртнĕ çулсенче çураки ĕçĕсене ытларах арçынсем тăватчĕç. Правленинче те, пухусенче те çакăн пек калаçнине илткелеме лекетчĕ:

— Сире, хĕрарăмсем, çăмăлтарах ĕçсене туса пырсан та юрать. Ака-суха ĕçĕ—арçын ĕçĕ вăл, тетчĕç.

Кăçал вара çуракине йăлтах хĕрарăмсен вăйĕпе ирттернĕ тесен те юрать. Вĕсене ку ĕçре отечественнăй аслă вăрçăн хирĕсенчи чаплă çĕнтерÿсем хавхалантарса пычĕç. «Путь Маркса» колхоз 14 кун хушшинче 115 гектар ытларах тĕрлĕ тырпул акса хăварчĕ, 10 гектар çĕрулми лартрĕ. Кунсăр пуçне тата оборона фондне хывма пĕр гектар пăрçа акрĕ.

Çуракинче 3-мĕш бригадăри А. Степанова, Т. Смирнова тата О. Бедникина юлташсем уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем акан малтанхи пилĕк кунĕнчех ĕç нормине ирттерсе тултарнăшăн 3-шер ĕçкунĕ преми илчĕç.

Акнă тырăсем шăтса тухрĕç ĕнтĕ.

Е. ЛАСТОЧКИНА.

Предприятисемпе артельсенчи социализмла ăмăрту

Цех коллективĕн обязательствисем

КАНАШ. Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнче ĕçлекенсем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне пуçарма чĕнсе каларĕç. Çак чĕнĕве Канаш станцинче тата вагонсем юсакан заводра ĕçлекенсем хапăл туса йышăнчĕç.

— Мускав узелĕнчи железнодорожниксен чĕнĕвĕ пире те тивет, — теççĕ вагонсем юсакан заводри стахановецсем. — Железнодорожниксем çĕршыва фронта кирлĕ таварсемпе хĕçпăшалсене вăхăтра турттарса тăрассишĕн кĕрешеççĕ пулсан, эпир вĕсем валли вагонсем ытларах юсаса парассишĕн кĕрешер.

Чĕнĕве пысăк хаваслăхпа сÿтсе-явaççĕ, цех коллективĕсем хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ. Ватон кустăрмисем тăвакан цех коллективĕ, сăмахран, çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

цехăн 10 уйăхри ĕç планне Октябрь уявĕ тĕлне тултармалла;

ĕç тухăçлăхне 10 процент таран ÿстермелле;

васкавлă заказсен графикне уйăхсерен 125 процент тултармалла;

продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чухлĕ чакармалла.

Кусемсĕр пуçне цехри рабочисем кашниех кулленхи ĕç нормине тултарса пыма, тепĕр ĕçе вĕренме, станоксене тирпейлĕ, ĕç вырăнне таса тытма пулаççĕ. Мастерсем 4—5 хĕрарăма станоксем çинче ĕçлеме вĕрентме обязательство илнĕ.

Цехра ку таранччен чылай хĕрарăмсене ĕçе вĕрентнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен нормисене ăнăçлăн тултарса ĕçлеççĕ. Сверловщица Афанасьева юлташ сменăри нормăна икĕ хут ирттерсе тултарать.

Юлашки вăхăтра цехри стахановецсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Токарь Медведев, сверловщик Ямбеков юлташсем нормăна пĕрмаях 300 процент таран тултараççĕ, токарь Елесин юлташ 300 процентран та ирттерет. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса вĕсем тата тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ.

Т. ИВАНОВ.

ĂМĂРТĂВА ХУТШĂНЧĔÇ

ЙĔПРЕÇ. (Хамăр корр.). Станцире ĕçлекенсем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Вĕсем поездсене пĕр чăрмавсăр çÿретес, вагонсене вăхăтра тиес, вăхăтра пушатас, чугунçул хуçалăхне юсавлă тытас тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура станцире ĕçлекенсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Стрелочниксем В. Герасимовпа Г. Клюковкин юлташсем стрелка хуçалăхне ялан юсавлă тытаççĕ, çавăнпа вĕсен поездсене йышăнса ăсатас ĕçре кăлтăксем пĕрре те пулмаççĕ. Стрелка хуçалăхне юсас ĕçре станци начальникĕ И. Гусев юлташ Лунин мелĕсемпе усă курать.

Унпа пĕрлех станци коллективĕ тасалăхпа йĕркелĕхшĕн хытă кĕрешет. Техничка Т. Клюковкина юлташ пассажирсен пÿлĕмне таса тытать, пÿлĕмре пĕр çÿп-çап та çук.

Вырăнти вагонсене вăхăтра тиесе е пушатса ăсатасси—станцин чи пысăк ĕçĕ. Ку тĕлĕшпе те станци коллективĕ хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Сăмахран, тырпул, апат-çимĕç тиесе килнĕ вагонсене нормăпа палăртнинчен хăвăртрах пушатаççĕ. Анчах йывăç материалсене тиесе ăсатас ĕçре чăрмавсем пур-ха, вагонсем хăшпĕр чухне талăк ытла тăраççĕ. Ку вăл вăрман хатĕрлекен организацисем ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса тăманнинчен килет.

ÇУЛПУÇ ПРИКАЗĔПЕ ХАВХАЛАНСА

— Эпир хамăра шанса панă ĕçе отлично пахалăхпа тата пĕр чăрмавсăр туса пыма пулатпăр. Пирĕн чугунçул тăрăх поездсем яланах йĕркеллĕ, хăвăрттăн çÿрĕç. — Çапла каларĕç Çĕмĕрле станцинче ĕçлекенсем Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Май уявĕ ячĕпе каларнă приказпа паллашнă хыççăн.

Станци коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна большевикла тимлĕхпе пурнăçласа пырать. Унăн ĕçĕнче простой, брак пулмасть. Çулпуç приказĕпе хавхаланнă рабочисемпе командирсем пур поездсене те пĕр чăрăнусăр, хăвăрт çÿретме тăрăшаççĕ. Вĕсем кашни поезда тивĕçлĕн кĕтсе илсе, пĕр минута та ахаль тăратмасăр ăсатаççĕ, линисене, стрелкăсене отлично тытаççĕ.

Коммунист Потапов — станци дежурнăйĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вăл отлично ĕçлет; ку таранччен унăн ĕçĕнче пĕр кăлтăк та пулман.

Çакăн пек ĕçлеççĕ составительсем Подуздиковпа Брюханов юлташсем те. Вĕсем поездсене яланах срокра пухса йĕркелеççĕ.

Юлашки вăхăтра уйрăмах стрелочниксем хушшинче ăмăрту анлăн саралса пырать. Бочков, Пыринова, Табункин тата Смирнова юлташсем стрелка хуçалăхĕнче лунинла меслетпе ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем стрелкăсемпе указательсене хăйсем тĕллĕнех, вырăнти майсемпе усă курса юсаççĕ, инструментсене тирпейлĕ тытаççĕ.

* * *

5-мĕш околоткри рабочисемпе командирсем чугунçула лайăх тытса тăрас тĕлĕшпе 4-мĕшпе 6-мĕш околотоксен коллективĕсемпе ăмăртăва тухнă. Вĕсен обязательстви — çула отлично пахалăхпа тытасси.

5-мĕш околоток коллективĕ (мастер М. Бурментьев юлташ) ăмăртура малта пырать. Кунта ĕçлекенсенчен çурри ытла стахановецсем-отличниксем. А. Пухов, П. Докухин юлташсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйсене çирĕплетсе панă километрсене пур енчен те отлично тытаççĕ. Ремонтнăй рабочисем И. Алексеев, С. Шуранов, А. Литонин, Е. Пензина, М. Шапкина юлташсем куллен хăйсене панă заданисене 140—170 процент тултараççĕ. Стахановец Алексеев юлташ апрель уйăх планне 150 процент, майăн малтанхи çурри уйăх планне 170 процента яхăн тултарчĕ.

Аслă çулпуç Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланнă железнодорожниксем çитĕнÿсене çирĕплетсе, татах та пысăкрах ÿсĕм тăвассишĕн кĕрешĕве сарса пыраççĕ, çапла ĕçленипе вĕсем фронта пысăк пулăшу параççĕ.

Х. ЛИСИН.

Тихасен шефĕсем

КАЛИНИНО. Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхозри комсомолецсем колхозри çамрăк тихасене шефа илчĕç.

А. Власов, О. Шорников, В. Егоров, А. Семенов комсомолецсем хăйсем шефа илнĕ тихасене юратса пăхаççĕ, вăхăтра тасатаççĕ, усăлтараççĕ. Вĕсене таса усраççĕ.

Комсомолецсем хăйсем пек ĕçлеме союзра тăман çамрăксене, пионерсемпе шкул ачисене те явăçтараççĕ.

В. МАЛЬЦЕВ.

Вăйлă тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хутăмăр

Эпир çуракине лайăх хатĕрленсе тухрăмăр. Фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленность валли чĕртавар ытларах туса парас тесе, пирĕн колхозниксем çуракинче фронтри патриотсем пек ĕçлерĕç. Çавна пула тĕштырăсене колхоз 7 кун хушшинче, пĕтĕм культурăсене 10 кун хушшинче акса хăварчĕ. Правительство панă план тăрăх пирĕн колхоз тĕштырăсене 375 гектар акмалла пулнă пулсан, эпир ăна ăнăçлăн пурнăçларăмăр; планран ирттерсе татах 30 гектар тулă акса хăвартăмăр. Планран ирттерсе акнă 30 гектартан 8 гектарне çĕршыв оборонин фондне хуратпăр тата нимĕç бандисен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма паратпăр.

Кăçалхи çуракинче колхозниксем пысăк çĕкленÿпе ĕçлерĕç. Пĕрремĕш бригадăри сухаçă Евстафий Задонов 2 лашапа куллен 1,20 гектар сухалас вырăнне 2,20—2,5 гектар сухаласа пычĕ. Вăл уйран кĕме пĕлмесĕр талăкра 18-шер сехет ĕçлерĕ. Çапла вара Задонов юлташ 7 кун хушшинче 45 ĕçкунĕ турĕ.

Сеялкăпа тырă акакан Елена Комиссарова юлташ норма тăрăх талăкне 6-шар гектар акас вырăнне, кулленех 12-шер гектар çурă акса пычĕ. Кунсерен 7-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ. Иккĕмĕш бригадăра та ĕçсем çавăн пекех пулса пычĕç. Е. Леонтьева, Е. Веревкина юлташсем суха тунă çĕрте ĕç нормине кулленех 185—200 процент таран тултарса ĕçлерĕç. Вĕсем тунă ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх.

Çуракин малтанхи кунĕсенче хăшпĕр колхозниксем талăкри ĕç нормине тултарайманни те пулчĕ. Вара эпир кашни кунхи ĕç графикне турăмăр, ĕç нормине сехетре мĕн чухлĕ пурнăçласа пыма кирлине шутласа кăлартăмăр. Кăна çуракинче ĕçлекен колхозниксене кашнинех тĕплĕн ăнлантарса патăмăр. Çакăн хыççăн, колхозниксем хушшинче социализмла ăмăрту вăйлăн саралчĕ. Кашни колхозник, колхозница графика тултарассишĕн тимлĕн ĕçлеме пуçларĕ. Тĕслĕхрен, сухаççен график тăрăх кашни сехетре 0,70 гектар сухаламалла. Графика ăнлантарса парсанах, ăна пурнăçламасăр хăваракан пĕр сухаçă та пулмарĕ, пурте ирттерсе пурнăçлама тăрăшрĕç.

Акнă 405 гектартан 342 гектарĕ çине тырăсене сеялкăсемпе акрăмăр. Пирĕн колхоз сортлă вăрлăхсем ÿстерет. Çавăнпа эпир тунă ĕçĕн ăнăçлăхĕ те паха йышши вăрлăхсем акнинчен килет. Кăна эпир яланах асра тытнă. Шултра, паха вăрлăхсене çителĕклĕ таран хĕллех хатĕрлесе хунă. Çапла кăçал эпир пĕтĕм çĕр лаптăкне сортлă вăрлăхсем акрăмăр.

Колхозниксен ĕç тухăçне çĕклеме çуракинче пĕрлешÿллĕ столовăй организацилени питĕ те пулăшрĕ. Е. Кузнецова, М. Портнова колхозницăсем уйра ĕçлекенсем патне вĕри апат вăхăтра илсе тухса тăчĕç. Вĕсем ĕçлекен кашни колхозникшăн чĕререн тăрăшни уççăн курăнса тăчĕ.

Лашасене те уйрах çитертĕмĕр. Конюхсем: И. Смирновпа М. Кувшинов кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вĕсем тăрăшса ĕçленине пула çуракинче ывăнакан тата стройран тухакан лашасем пачах пулмарĕç.

Агитациллĕ-масăллă ĕçе тивĕçлипе туса пытăмăр. Наперсткина, Майрина тата ытти агитаторсем уйра ĕçлекенсем патне тухса Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, боевой эпизодсене вуласа тăчĕç. Бригадăри стена хаçачĕсем 3—4-шер номер тухрĕç тата колхозăн «Трактор» ятлă стена хаçатне те 2 номер кăлартăмăр. «Трактор» стена хаçачĕн страници çинче П. Майрин колхозник ĕçе кая юлса тухни тата тухсан та ÿрĕк-сÿрĕк ĕçлени çинчен çырнăччĕ. Кун хыççăн Майрин юлташ 2—3 кун хушши хĕрелсе çÿрерĕ, тепĕр куннех ĕçе вăхăтра тухса хĕрÿллĕн ĕçлеме тытăнчĕ.

Ака ĕçĕ вĕçленнĕ хыççăнах, колхозниксем кĕрхи тырăсене çум курăкĕсенчен тасатма, калчасене апатлантарма тытăнчĕç. Майăн 27-мĕш тĕлне пурĕ 223 гектар çинчи ыраш калчине, 26 гектар çинчи кĕрхи тулăна çумкурăксенчен тасатрăмăр, 76 гектар çинчи кĕрхи тырăсене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, кĕлпе тата минераллă удобренипе апатлантартăмăр. Колхозăн пахчине çимĕçсем лартрăмăр.

Халĕ колхозниксем хăйсен кил вырăнĕсенче тата вăрман хатĕрлев ĕçĕнче хĕрсех ĕçлеççĕ.

Тип-тикĕс шăтса тухнă калчасем кăçал вăйлă тырпул пухса кĕме шанчăк параççĕ. Тырпулсене пухса кĕме эпир июнĕн 15-мĕш тĕлне хатĕрленсе çитетпĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказ çине ответлесе çапла тума сăмах параççĕ:

Сталин юлташăн боевой приказне пурнăçлама—1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăлармалли çултаăк туса хума Хĕрлĕ Çара пулăшмашкăн эпир кăçал кашни гектартан 100—120 пăт тĕштырă туса илетпĕр.

Я. КУЗНЕЦОВ.

Чкаловски районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Гитлеровецсем совет артиллерийĕнчен питĕ хăраççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). «Берлинер берзенцейтунг» ятлă гитлерла хаçатăн майăн 20-мĕшĕнчи номерĕнче военнăй корреспондент çакна йышăнать: советăн зенитнăй артиллерийĕ нимĕçсен авиацине пысăк сиен кÿрет. «Советăн зенитнăй артиллерийĕ персе тăракан районсенче, — тесе çырать хаçат, — хытă сыхланас пулать. Пирĕн сухатусем пысăк пулни советăн çав артиллерийĕ питĕ тĕл пенине кăтартать. Пире сывлăшран та хăратса тăраççĕ, мĕншĕн тесен совет истребителĕсем пире яланах вăрттăн сыхласа çÿреççĕ. Пирĕн аэродром çĕмрĕк самолетсемпе тулса ларнă, çавсем ĕнтĕ кĕрешÿри йывăрлăх çинчен калаççĕ».

Франци халăхĕ кĕрешме чарăнман

Де Голль радио тăрăх тухса калани

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал Франци халăхне радио тăрăх чĕнсе каланă. Хăйĕн чĕнĕвĕнче де Голль çапла каланă: вăрçă виççĕмĕш çул пырать, анчах Франци халăхĕ кĕрешме пăрахмасть. Нимĕçсен темĕн тĕрлĕ террорне, асаплантарса вĕлернисене тата арестленисене пăхмасăр, Франци халăхĕ хăйĕн пĕтĕм шухăшкăмăлĕ тăшмана хирĕç кĕрешме çунса тăнине Сен-Назерти, Нантри, Парижри, Бордори, Страсбургри ĕçсемпе кăтартса пачĕ. Франция,—тенĕ де Голль, — хăйĕн вăрçăллă шухăш-кăмăлне çÿлте тытса, хăйĕн аллинчи мĕнпур средствăсемпе те тăшмана хирĕç кĕрешсе, союзниксене вăйлă пулăшу пама пултарать.

Францире Гитлер çарĕ валли „добровалецсем“ пухас ĕç путланса ларнă

СТАМБУЛ, майăн 26-мĕш. (ТАСС). Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ирĕклĕ французсен журналĕ «Франк» Лаваль Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта яма «добровалецсем» пухма хăтланни путланса ларни çинчен Францирен янă çырăва пичетлесе кăларнă. «Добровалецсем» пухас кампание ирттерес ĕçе Гитлер каланă тăрăх унăн агентне — Дориона хушнă. Вăл Франции оккупациленĕ территоринчи мĕнпур прессăна мобилизациленĕ тата çуртсен стенисем çине француз çамрăкĕсене «Германи çарĕпе пĕрле цивилизацие çăлса хăвармашкăн Германи çарне кĕме» чĕнекен плакатсене çыпăçтарса тултарнă. Анчах Гитлершăн вилме килĕшекен çынсене Дорио çĕр çын та пухайман. Халăх Дорио уçнă вербовочнăй бюросене нумайĕшĕнне чÿречисене çапса çĕмĕрнĕ.

Гитлеровецсем Францире вулкан çинче пурăннă пек пурăнаççĕ

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Францире каллех массăллă арестсем туса ирттернĕ. Полици, оккупациллĕ влаçсене хирĕç тăракансен ушкăнĕсене организацилекенсене шыраса, Парижра, Шербурта, Турта, Нантра тата Руанра халăхсене хупăрла-хупăрла илсе ухтарнă.

Юлашки эрне хушшинче питех те нумай арестсем Парижра, рабочисем пурăнакан кварталсенче пулса иртнĕ. Çĕнĕ вăрттăн листовкăсем, хаçатсем нумай тухма пуçланине кура, гестаповецсем кунта вăрттăн ĕçлекен типографисене шыраса тупасшăн.

Албанире партизанла кĕрешÿ вăйланни

СТАМБУЛ, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Албани патриочĕсен кĕрешĕвĕ Итали захватчикĕсене хирĕç пĕрмаях пыракан вăрçă пулса тăчĕ. Грецирен нумай пулмасть таврăннă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, партизанла отрядсем Круа районĕнче — Италин оккупациллĕ войскисене апат-çимĕçсемпе хĕçпăшалсем парса тăракан кирлĕ пунктра — каллех çапăçусем пуçарса янă. Партизансем унта Итали войскисене йывăр çухатусем кÿнĕ тата вĕсен мĕнпур нефтехранилищисемпе хĕçпăшал склачĕсене сирпĕнтерсе янă. Партизансемпе итальянецсем хушшинчи вăйлă çапăçусем çавăн пекех Тиранăри Пикар районĕнче пуçланса кайнă.

Çак кунсенче Тиранăра Албанин пуканеллĕ «премьерĕ» Мустафа Круа çине бомба пăрахнă. Çавăн хыççăн Албанин 200 заложникне арестлесе Италие ăсатнă. Темиçе кун иртсен çамрăк албанецсен групи Тиранăн урамĕсенчен пĕринче полици начальникне Али Кечине персе вĕлернĕ. Унăн вилли çине: «Тăван çĕршыва сутакансене пурне те çакăн пек шăпа кĕтет», тесе хут çырса хăварнă. Итали командованийĕ Албанире осаднăй положени тунă. Фашистла патрульсем пилĕк çынран нумайрах ушкăнсем, велосипедистсем, вуаль витĕннĕ хĕрарăмсем курăнсан, вĕсем çине ним асăрхаттармасăр пеме приказ илнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Майăн 23-мĕшпе 27-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Австралин Çурçĕрти сыранĕн районĕнче юлашки эрне хушшинче союзниксен авиацийĕ пысăк активлăх кăтартнă. Вăл японецсем йышăнса илнĕ пунктсем çине тата вĕсем тунă тинĕс-çар тата сывлăшри çар базисем çине кашни кунах икшер-виçшер хут вĕççе пырса тапăннă.

Японецсем Морсбири (Çĕнĕ Гвинейăн кăнтăр сыранĕнчи) тинĕс çарĕпе авиацин пысăк бази çине виçĕ хутчен вĕççе пырса тапăннă.

Бирмăра Англипе Америка авиацийĕсен операцийĕсем кăна пулнă.

Китайăн Юньнаньри войскисем ытларах та ытларах активлăн кĕрешме тытăнаççĕ, контратакăсем тăваççĕ. Унта çак вăхăтра кашни çулах пулакан вăйлă çумăрсем çума пуçланă. Çулйĕрсене шыв çура-çура кайни Японин механизациллĕ çар чаçĕсене çапăçма хытă кансĕрлет.

Китайăн хĕвелтухăç пайĕнче, Чжэцзян провинцийĕнче Ханчжоу районĕнчен кăнтăралла наступлени туса пыракан Япони войскисем пуринчен ытла Цзиньхуа (Чжецзян—Цзянси чугунçул çинчи паха пункт) çинелле хытă тапăнса пыраççĕ. Çапăçусем хула сывăхĕнче пыраççĕ.

Венгрипе Румыни хушшинчи хирĕçÿсем çивĕчленни

СТАМБУЛ, майăн 26-мĕш. (ТАСС). Венгрипе Румыни хушшинчи отношенисем кунсерен çивĕчленсе пыраççĕ.

Нумаях пулмасть Венгрипе Румыни хаçачĕсем хушшинче çивĕч тавлашу пуçланса кайнă. Сăлтавĕ çакă: румынсен «Аслă Румыния» ятлă вăрттăн ĕçлекен радиостанцийĕ Венгрие хирĕç передачăсем панă. Венгерсен хаçачĕ «Пэстер ллойд» Румыни правительствинчен çав станци ăçта тесе çиленсе ыйтнă. «Нейе цюрхер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çавна хирĕç протестлесе Румыни правительстви Венгри правительствине нота панă. Нотăра каланă тăрăх, Румыни правительствипе «Аслă Румыния» станцийĕ хушшинче нимĕнле çыхăну та çук пулать.

Венгрипе Хорвати хушшинчи отношенисене пăсса ярас шутпа Антонеску Загреб хулине «румынсен культура делегацине» янă. Румынсен хаçачĕсем çав делегаци кайни çинчен темĕн пекех палăртса çырнă, румынсен делегацийĕ хорватсем патне кайни вăл—«румынсемпе хорватсем хушшинчи туслăх манифестацийĕ» пулать тесе çырнă вĕсем. Венгерсен хаçачĕсем румынсен делегацийĕ Загреба кайни çинчен «çакă вăл румынсем Венгрие хирĕç тăшманла ĕçленине кăтартакан факт пулса тăрать», тесе çырнă.

Ютçĕршыв хаçачĕсен Венгрире пурăнакан корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Венгрипе Румыни хушшинчи отношенисем питех те çивĕчленсе çитнĕ, кунта яланах пысăк ĕçсем пуçланса каяссине кĕтсе тăма пулать.

Болгарире продовольстви тĕлĕшпе пурăнăç начарланнă

АНКАРА, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Болгари правительствине пуринчен ытла халăха продовольстви парса тăрас ĕç йывăрланса çитни шиклентерет. Суту-илÿ министерстви шурă çăкăр пĕçерме пачах чарса лартнă, ăна пĕчĕк ачасемпе чирлисем валли те пĕçерттермеççĕ. Министерство постановленийĕнче тата çапла каланă: вак выльăхчĕрлĕх хуçисем вĕсен çавăн пек выльăх мĕн чухлĕ пурри çинчен суту-илÿ министерствине сведенисем тăратмалла, тенĕ.

Англие Канада войскисем çитнĕ

ЛОНДОН, майăн 27-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи порчĕсенчен пĕрне Канада войскисен çĕнĕ контингенчĕсем çитнĕ, вăл шутра инженернăй чаçсем те пур.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ВИНКОМБИНАТУ РОСГЛАВВИНО, ТРЕБУЮТСЯ уполномоченные и агенты по заготовкам плодов и ягод в районах: Аликовском, Ишлейском, Калининском, Чебоксарском, Цивильском, Советском, Сундырском, Ядринском.

На работу принимаются как мужчины, так и женщины.

С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная, дом № 21, тел. 1-73, один звонок.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ПРИСТАНИ требуется: экономист, зам. главного бухгалтера, бухгалтер, кассир-инкассатор.

Предоставляется жилплощадь.

ПРИСТАНЬ.

ЧУВАШМЕТРОВЕСУ требуется счетовод.

Одиночки обеспечиваются жилплощадью. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 46.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 812. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: м: